чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи март уйăхĕн 11-мĕшĕнче “Коммунизм ялавĕ” /халĕ “Хыпар”/ хаçата “ХИСЕП ПАЛЛИ” орденпа наградăланă

ШĂМАТКУН
2014, ноябрь
8

219 /26625/ №
Хакĕ ирĕклĕ
www.hypar.ru

Амăшĕн капиталĕ 2
**Укçапа кирек хăçан та усă курма юрать**

Самана таппи 4
**Демографири пархатарлă улшăнусемшĕн**

Астăвăм 5
**Хамăрлăха çухатас марччĕ**

## Саламлатăп!

**Шалти ĕçсен органĕсен хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Эсир право йĕркине сыхлассипе, граждансен хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе, вĕсен интересĕсемпе прависене хӳтĕлессипе çыхăннă кăткăс тата питĕ пĕлтерĕшлĕ ĕçе пурнăçлатăр.

Чăваш Енĕн шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕсем хăйсен служба тивĕçĕсене пысăк профессионализмпа тата яваплăха туйса чыслăн пурнăçлаççĕ. Эсир ăнăçлă тата тухăçлă ĕçленине кура республикăра преступленисене уçса парасси лайăхланать, массăллă мероприятисем иртнĕ чухне йĕркелĕхе шанчăклă тивĕçтеретĕр. Профилактика мерисем тĕлĕшпе те тимлĕ – çакă правăна пăснă тĕслĕхсен шутне чакарма май парать. Ведомствăсем тачă çыхăну тытса ĕçлени халăх хушшинче наркомани сарăласран, çынсем ĕçкĕпе иртĕхесрен сыхланма пулăшать.

«Хăрушлăхсăр хула» аппаратпа программа комплексĕн право хуралĕпе çыхăннă сегментне йĕркелесси малалла пырать. Унăн тытăмне видеосăнав, васкавлă «гражданин – полици» çыхăну, куçакан объектсене йĕрлесси кĕрессĕ.

Паян çулсем çинчи аварисен шутне чакарас, çулçӳреве хутшăнакансен хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе нумай ĕçлетпĕр, çак тĕллевпе çĕнĕ техника, çав шутра фотовидеофиксацин 46 комплексне туяннă.

Шалти ĕçсен органĕсен ветеранĕсене, хăйсен пуян опытне çамрăк ĕçтешĕсене паракансене, уйрăммăн тав тăватăп. Чăваш Республикинче пурăнакансене эсир киревсĕр пулăмсенчен яланах шанчăклă хӳтĕлессе шанатăп.

Сире çирĕп сывлăх, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2015 çулăн I çурри валли Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ.**

**"Хыпар" – 732 тенкĕ те 66 пус.**

**"Хыпар"-шăматкун – 304 тенкĕ те 08 пус.**

**Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене "Чăваш пичечĕн", "Советская Чувашия" хаçатăн киоскĕсенче, "Хыпар" редакцийĕнче туянма тата çырăнма пулать.**




# Сĕрĕм тивнĕ çамрăклăх

## Ноябрĕн 17-мĕшĕнче «Вилĕме ăçта сутнине пĕлтер!» акци пуçланать

***Кăçалхи кĕркунне Раççейре çынсем психоактивлă çĕнĕ йышши туртмалли хутăшпа, MDMB (N)BZ-F формулăллăскерпе, наркăмăшланнин 800 ытла тĕслĕхне шута илнĕ. Çак хутăш Раççей Федерацийĕнче тĕрĕслесе тăмалли наркотик хатĕрĕсен, психотроплă хутăшсен тата вĕсен прекурсорĕсен РФ Правительствин йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ переченьне кĕмест.***

Республика прокуратуринчен пĕлтернĕ тăрăх – сентябрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа Чăваш Енре те граждансем паллă мар хутăшпа усă курнă хыççăн медпулăшу ыйтнă тĕслĕхсем тăруках нумайланнă. 100 ытла çын аптăранă, çав шутра 20-шĕ – 15-17 çулсенчи çамрăксем. 25 çын хăйхи çĕнĕ хутăшпа наркăмăшланнин паллисене палăртнă. Вĕсенчен 20-шĕ шăпах MDMB (N)BZ-F хутăшпа сиенленнĕ.

Ăна туртнă хыççăн çынсен галлюцинаци, куç курми пулнă, пуç минренĕ, шăнăр туртнин синдромĕ палăрнă, сывлав пăсăлнă, вĕсем темрен хăранă, мĕн пулса иртнине ас туман. Медучреждениесене илсе пынисен тĕп йышĕ – 18-30 çулсенчи çынсем, çав шутра 90% – 18-21 çулсенчи çамрăксем. Ытларахăшĕ ниçта та ĕçлемест, вĕренмест.

Асăннă кунран тытăнса çынсем вилнин икĕ тĕслĕхне палăртнă. Иккĕшĕнпе те УК 238 статйин 2-мĕш пайĕпе /хăрушсăрлăх требованийĕсене тивĕçтермен таварсемпе продукци сутнă май асăрханмасăр çынна вилĕм кӳни/ уголовлă ĕçсем пуçарнă. Çак статьян "в” пункчĕн санкцийĕ çирĕп – айăплине 6 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварма пултараççĕ.

Пĕрремĕш уголовлă ĕçе сентябрĕн 30-мĕшĕнче тупса палăртман çын тĕлĕшпе пуçарнă. Гражданин Интернет урлă унран çĕнĕ йышши психоактивлă хутăш туяннă та ăна тепĕр арçынпа хăйĕн килĕнче туртнă. Следстви органĕсем тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх – çакăн хыççăн вăл тăнне çухатнă. Тăна кĕнĕ те – хăна сывламасть. Васкавлă медпулăшу врачĕсен арçын вилнине çирĕплетмелли кăна юлнă. Кунтах полици сотрудникĕсем хайхи наркăмăшан юлашкине /пĕр грамм/ тупса туртса илнĕ. Октябрĕн 2-мĕшĕнче уголовлă тепĕр ĕç çуралнă. Ку тĕслĕхре те çын вилнĕ. Медучреждениере сывлама пăрахнăскерĕн курткин кĕсйинче туртмалли хутăш тупнă.

Малтанхи следстви версийĕ çапларах: çынсем MDMB (N)BZ-F хутăшпа наркăмăшланнă. Чăн та, судпа медицина экспертизин пĕтĕмлетĕвĕ паллă мар-ха. Унсăр пуçне асăннă уголовлă ĕçсемпе физикăпа хими экспертизине те ирттернĕ. Çакă туртса илнĕ хутăшсене наркотик хатĕрĕсен аналогĕсен шутне кĕртме кирлĕ. Тĕпчев хутăшсен хими формулине палăртма май панă: MDMB (N)BZ-F – наркотик хатĕрĕсен тытăмĕнчи аналог шутланать, Раççей территорийĕнче унăн çаврăнăшне чарнă.

Çавна май уголовлă ĕçсене 238-мĕшĕнчен 228.1 статья çине куçарас ыйтупа ĕçлеççĕ. Ку статья – наркотик хатĕрĕсен саккунсăр производствишĕн, вĕсене сутнăшăн айăпламаллискер, яваплăхĕ те чылай çирĕпрех – айăплине пурнăç тăршшĕпех хупса усрамалли приговор та пулма пултарать.

Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – ШĔМ, Наркотĕрĕслев сотрудникĕсемпе пĕрле йĕркеленĕ оперативлă шырав мероприятийĕсем пулăшнипе сентябрьте Шупашкарта асăннă хутăша сутнин тата икĕ тĕслĕхне тупса палăртнă. Пĕр тĕслĕхре наркăмăша тĕп хула çынни туяннă, тепринче – Канаш районĕн çынни. Сăмах май, Канашран килнĕскер пакунлисем хăй мĕнешкел хăрушă хутăш туяннине пĕлтерсен вĕсене тав тунă-мĕн – йĕркелĕх хуралçисем ăна вăхăтра тытса чарнă май наркăмăшпа усă курма паман-çке. Çапла туса, тен, вилĕмрен çăлса хăварнă пуль.

→ 2 стр.

# Ют ачасем çук, вӗсем пурте – пирӗн

***Ноябрь уйӑхӗн 6-мӗшӗнче Чӑваш Ен премьер-министрӗ Иван Моторин Раççей Федерацийӗн Правительствин Председателӗн çумӗ Ольга Голодец ертсе пынӑ курав конференцийӗн мелӗпе йӗркеленӗ канашлӑва хутшӑннӑ.***



Унта тӑлӑхсене тата ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр юлнӑ ачасене граждансен çемйисене воспитани илмешкӗн вырнаçтарассипе çыхӑннӑ ыйтӑва сӳтсе явнӑ.

Ольга Голодец палӑртнӑ тӑрӑх – тӑлӑхсен тата ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр юлнӑ ачасен интересӗсене хӳтӗлесе патшалӑх политикине пурнӑçлас енӗпе Раççей Федерацийӗн мӗнпур субъектӗнче çине тӑрса ӗçлеççӗ, вӗсенче тӑлӑхсен йышӗ чакса пырать. РФ вӗренӳ министрӗ Дмитрий Ливанов çакна çирӗплетнӗ: асӑннӑ ушкӑна кӗрекенсем кӑтартусен банкӗнче те сахалланса пыраççӗ, хальхи вӑхӑтра унта 92 пин ытларах анкета кӑна, çулталӑк вӗçленнӗ тӗле ку хисеп 90 пине çити чакмалла.

Чӑваш Республикинче влаç органӗсем опекӑпа попечительлӗх тытӑмӗсемпе, социаллӑ служба́семпе, общество организацийӗсемпе килӗштерсе ӗçленипе тӑлӑхсемпе ашшӗ-амӑшӗн хӳттисӗр юлнӑ ачасен йышӗ чакать /2010 çулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне – 3876, 2013 çулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне – 3536, 2014 çулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне – 3432 ача/. Социаллӑ тӑлӑхсен хушшинче çемьесене вырнаçтарнисем нумайланаççӗ /2010 çулта – 80,6, 2013 çул пуçламӑшӗнче – 88,8, 2014 çулхи январь уйӑхӗн 1-мӗшӗ тӗлне – 90,1 процент/, вӗсене пуçласа тупса палӑртнисен шучӗ те сахалланать /2010 çулта – 574, 2013 çулта – 390, кӑçалхи январь уйӑхӗн 1-мӗшӗ тӗлне – 285/. Ача çурчӗсен тата интернат шкулсен воспитанникӗсен хисепӗ те икӗ хута яхӑн чакнӑ /2010 çулта – 678, 2013 çулта – 335, кӑçалхи январь уйӑхӗн 1-мӗшӗ тӗлне – 250 ача/.

Тивӗçлӗ мерӑсем йышӑннипе ача çурчӗсемпе интернат учрежденийӗсен тытӑмне оптимизациленӗ, коррекци интернат шкулӗсенчен 4-шне, ача çурчӗсенчен 3-шне хупнӑ. Паян республикӑри вӗренӳ тытӑмӗнче ачасен виçӗ çурчӗ тата коррекцин 8 интернат шкулӗ, сывлӑх сыхлавӗн тытӑмӗнче хевтесӗр ачасен ятарлӑ 2 çурчӗ тата социаллӑ хӳтлӗх тытӑмӗнче 1 интернат çурчӗ ӗçлеççӗ.

Хальхи вӑхӑтра 721 çемьере 1099 ача тӑван кил ӑшшине тупнӑ /2013 çулта – 654 çемьере 986 ача, 2012 çулта – 571 çемьере 865 ача/. Унсӑр пуçне 1949-шне опекунсемпе попечительсен 1661 çемйи хӳтлӗх парать.

Сӑмах май, тӑлӑх ачасене çемьене йышӑнакансене патшалӑх шалу тӳлет: 1-2 ачана пӑхса усранӑшӑн уйӑхра – 3295, 3 е ытларахшӑн – 4680 тенкӗ. 3 çула çитмен е хевтесӗр кашни ачашӑн – шалу çумне чи пӗчӗк ӗç укçин 50 процентӗнчен кая мар хушса параççӗ. 6 е ытларах ачана йышӑнсан ашшӗ-амӑшӗнчен иккӗмӗшне е пӗртен пӗр ашшӗ-амӑшне тата – 4680 тенкӗ, кашни хевтесӗршӗн чи пӗчӗк ӗç укçин 50 процентӗ чухлӗ хушса тӳлеççӗ.

■ **В.СМИРНОВА**

# Сӗрӗм тивнӗ çамрӑклӑх

**/Вӗçӗ. Пуçламӑшӗ 1-мӗш стр./.**

Республика прокуратуринче çынсем психоактивлӑ хутӑшсемпе усӑ курасран сыхланас тӗлӗшпе профилактика ӗçӗ пысӑк пӗлтерӗшлине палӑртаççӗ. «Вилӗм сутакансем» ытларах чухне граждансене «туртмалли сиенсӗр хутӑш сутатпӑр» тесе улталаççӗ вӗт. Чӑннипе вара çав хутӑшсен тӗп пайӗ пурнӑçпа сывлӑхшӑн хӑрушӑ, нумайӑшӗн витӗмӗ официаллӑ майпа наркотик тесе çирӗплетнӗ хатӗрсен сиенӗнчен те пысӑкрах. Вӑл е ку хутӑша Наркотик хатӗрӗсен çӳлерех асӑннӑ перечене кӗртмешкӗн темиçе уйӑх кирлӗ. Усламшӑн çунакансем çакӑнпа усӑ кураççӗ те. Вӑл е ку хутӑш тӗлӗшпе чару палӑртиччен пиншер çын сиенленме ӗлкӗрет, вилекенсем те пайтах.

ЧР прокуратури право хуралӗн, патшалӑх влаçӗн тата вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе пӗрле ноябрӗн 17-мӗшӗнчен тытӑнса декабрӗн 17-мӗшӗччен «Вилӗме ӑçта сутнине пӗлтер!» акци йӗркелет. Тӗллев – наркотиксен кӑна мар, психоактивлӑ мӗнпур хутӑшӑн, çав шутра туртмалли хутӑшсен саккунсӑр çаврӑнӑшне пӳлесси.

Акци вӑхӑтӗнче республика прокуратуринче, ЧР ШӖМӗнче тата Наркотӗрӗслев управленийӗнче шанӑç телефонӗсем ӗçлеççӗ, вӗсемпе шӑнкӑравласа тата электрон почтипе наркотиксемпе ӑçта усӑ курни, ӑçта сутни çинчен анонимлӑ майпа пӗлтерме пулать. Унсӑр пуçне ял-хулара çакнашкал пӗлтерӳсене пухмалли ешчӗксем вырнаçтарнӑ. Калӑпӑр, Шупашкарта – «Каскад», «МТВ-Центр» суту-илӳ центрӗсенче, «Шупашкар» пасар территорийӗнче, ЧР прокуратурин çуртӗнче, хула администрацийӗнче, Юстици çуртӗнче, Тӗп автовокзалта, «Салют» культура керменӗнче, «Ача-пӑча тӗнчи» лавкка патӗнчи пӗлтерӳсен хӑми çинче. Çакнашкал ешчӗксем ытти çӗрте те пулӗç, граждансем унта яракан пӗлтерӳсене прокуратура ӗçченӗсем илӗç. Мӗнпур пӗлтерӗве регистрацилеççӗ, вӗсем тӑрӑх тӗрӗслев ирттерессине прокуратура органӗсем сӑнаса тӑрӗç. Республика прокуратури пурне те пӗрлехи инкеке хирӗç çӗкленме чӗнет. Пирӗн ачасен, тӑвансен, çывӑх çынсен пурнӑçӗпе сывлӑхӗ хӑрушлӑха лекме пултарать-çке – çакна манас марччӗ.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

✓ ЧӐВАШ ЕНРЕ КӐÇАЛ «СПАЙС» ЙЫШШИ ХУТӐШСЕН САККУНСӐР ÇАВРӐНӐШӖШӖН ÇУЛ ÇИТМЕН 21 ÇАМРӐКА УГОЛОВЛӐ МАЙПА ЯВАП ТЫТТАРНӐ. ÇАВ ШУТРА 16-ШӖ – ШУПАШКАР ÇАМРӐКӖСЕМ

**Наркотик сутакан вырӑнсем çинчен анонимлӑ майпа пӗлтермелли телефон тата электрон почтин адресӗ**

**8-937-013-93-41 prokur@cap.ru**

**Хӗрӳ лини телефонӗсем**

| ЧР прокуратури | Наркотӗрӗслев | ЧР ШӖМӗ |
|---|---|---|
| 39-20-12 | 23-01-00 | 24-16-55 |

# Ӗççӗррисен шучӗ чакнӑ

***Ноябрӗн 5-мӗшӗнче ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗ Иван Моторин республика Правительствин членӗсемпе, федерацин влаç органӗсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернӗ.***

ЧР Халӑха ӗçпе тивӗçтерекен патшалӑх службин ертӳçи Сергей Димитриев çынсене ӗçе вырнаçма пулӑшмалли мероприятисене пурнӑçлани çинчен каласа панӑ. Çак тӗллевпе 2014 çулта 469,4 млн тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ. Ӗçлев службин органӗсем 36,7 пине яхӑн çынна ӗçе вырнаçтарнӑ. Унсӑр пуçне Украина гражданӗсене, Чӑваш Ене тарса килнӗскерсене, ӗçпе тивӗçтерес енӗпе те чылай ӗçленӗ. Октябрӗн 28-мӗшӗ тӗлне 480 çынна ӗçе вырнаçтарнӑ.

Йышӑннӑ мерӑсем регистрациленӗ ӗççӗр граждансен йышне 17,8% чакарма май панӑ. Çавна май регистрацилекен ӗççӗрлӗх шайӗ 0,73-рен 0,59% таран пӗчӗкленнӗ. Премьер-министр юлашки 3-4 çулта Чӑваш Ен ӗççӗрлӗхе чакарас енӗпе лидерсен шутӗнче пулнине, ырӑ çак туртӑмсене упраса хӑвармаллине палӑртнӑ.

Патшалӑх контракчӗсене мӗнле пурнӑçлани тата саккасçӑсем контракт условийӗсене пӑснӑ тӗслӗхсенче мӗнле ӗçлени çинчен экономика аталанӑвӗн министрӗ Владимир Аврелькин каласа панӑ. Кӑçалхи 9 уйӑхра патшалӑхпа муниципалитет контракчӗсене 8 млрд тенкӗлӗх тунӑ. 46 контракта вӑхӑтра пурнӑçламан. Саккасçӑсен сиене шыраса илес енӗпе ӗçлеççӗ. Январь-сентябрь уйӑхӗсенче саккасçӑсем судсене 43,2 млн тенкӗ шыраса илме тавӑçсем тӑратнӑ. 36,2 млн тенке шыраса илмелли йышӑнусем кӑларнӑ. Контрактсене пурнӑçламаннисем хӑйсен ирӗкӗпе 58,2 пин тенке бюджета тавӑрса панӑ. Иван Моторин суд йышӑнӑвӗсене пурнӑçлас енӗпе çине тӑрса ӗçлеме хушнӑ.

■ **Н.ЯКОВЛЕВ**

АМӐШӖН КАПИТАЛӖ

# Укçапа кирек хӑçан та усӑ курма юрать

Çӗршывӑн 2015-2017 çулсенчи бюджетне çирӗплетнӗ май амӑшӗн капиталӗн темине массӑллӑ информаци хатӗрӗсенче пуçарулла сӳтсе яврӗç. Çакна тӗпе хурса РФ Пенси фончӗн Чӑваш Республикинчи уйрӑмӗ акӑ мӗн пӗлтерет: вӑйра тӑракан саккун тӑрӑх çемьери иккӗмӗш е ун хыççӑнхи ачана 2016 çулхи декабрӗн 31-мӗшӗччен çуратсан /усрава илсен/ амӑшӗн капиталӗн сертификатне кирек хӑш вӑхӑтра тивӗçме пулать тата унӑн укçипе усӑ курмалли вӑхӑта чикӗлемен.

Паянхи куна асӑннӑ сертификата пирӗн республикӑри 55,3 пин çемье илнӗ. Вӗсен çуррийӗ ытла çав укçана тӑкакланӑ ӗнтӗ /çак тӗллевпе Пенси фончӗн уйрӑмне пӗтӗмпе 33,6 пин заявлени панӑ/.

Амӑшӗн капиталӗ шучӗпе ытларахӑшӗ пурӑнмалли условисене лайӑхлатмашкӑн усӑ курнӑ – 11 млрд тенкӗ хывнӑ. Çемьесем ӑна ипотека кредитне татмашкӑн, хваттер туянмашкӑн, строительство организацийӗсене явӑçтармасӑр çурт лартмашкӑн е ӑна çӗнетсе улӑштармашкӑн, пая кӗрсе çурт строительствине хутшӑнмашкӑн тӑкакласçӗ.

Аслӑ ачисене университет-институтра тата колледжсенче вӗрентнӗшӗн, вӗсене студентсен общежитийӗнче пурӑнтарнӑшӑн, ачана садике çӳретнӗшӗн тӳлеме çемье капиталӗ шучӗпе 32 млн тенкӗ куçарса панӑ.

Амӑшӗн пулас пенсийӗн пухӑнса пыракан пайне йӗркелемешкӗн республикӑра заявлени паракан хальлӗхе пулман-ха.

Федераци саккунӗ вӑйра тӑнӑ сакӑр çулта амӑшӗн капиталӗн виçи 250 пинрен 429 пин тенке çитнӗ.

■ **В.ИЛЬИНА**

***Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Председателӗн ХУШӐВӖ***

**Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетлӗ çирӗм пиллӗкмӗш сессине пухасси çинчен**

Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетлӗ çирӗм пиллӗкмӗш сессине 2014 çулхи ноябрӗн 18-мӗшӗнче Шупашкар хулинче Правительство çуртӗн Ларусен пысӑк залӗнче пухас.

10 сехетре пуçланать.

**Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Председателӗ Ю.ПОПОВ.**

**Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетлӗ çирӗм пиллӗкмӗш сессийӗн кун йӗркин проекчӗ**

Чӑваш Республикин пиллӗкмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетлӗ çирӗм пиллӗкмӗш сессийӗнче 10 ытла ыйту пӑхса тухма палӑртаççӗ, çав шутра:

1. Чӑваш Республикин «Чӑваш Республикин 2015 çулхи тата планпа пӑхнӑ 2016 тата 2017 çулсенчи тапхӑрӗн республика бюджечӗ çинчен» саккунӗн проекчӗ çинчен.

2. Чӑваш Республикин «Чӑваш Республикин Обязательнӑй медицина страхованийӗн территорири фончӗн 2015 çулхи тата планпа пӑхнӑ 2016 тата 2017 çулсенчи тапхӑрӗн бюджечӗ çинчен» саккунӗн проекчӗ çинчен.

3. Чӑваш Республикин «Чӑваш Республикин «Чӑваш Республикин халӑхне тата территорийӗсене çутçанталӑк тата техногенлӑ чрезвычайлӑ лару-тӑруран сыхласси çинчен» саккунне улшӑнусем кӗртесси çинчен» саккунӗн проекчӗ çинчен.

ĔÇЛЕВ

# Вĕренме нихăçан та кая мар

***Ăслă çынсем темĕн те пĕлеççĕ, ĕçлĕ хутшăнусем йĕркелесе пурнăçа ăнтараççĕ, сум çумне сум хушаççĕ, йывăрлăхра пулăшма вăй çитереççĕ. Этем çакна мĕн авалтан асра тытать, кунран-кун ытларах пĕлме тăрăшать: ятарлă литература, хаçат-журнал вулать, юлашки вăхăтра вара Интернет уçлăхне çул хывать.***



*● Центрăн çамрăк специалисчĕсем – ертсе пыракан инспекторĕсем: Елена Козлова, Ольга Петрова, Олеся Краснова.*

Вĕренӳ тата пĕлӳ енчен ваттисен сăмахĕ иксĕлми пуян: «Пĕлни çăкăр ыйтмасть, хăвнах кирлĕ пулĕ», «Çĕр çул пурăн, çĕр çул вĕрен», «Пĕлӳ кутамкка мар, хулпуççинчен уртăнмасть».

Ку чухнехи кăткăс пурнăçра ĕç шыраса хăшкăлакансемшĕн çак сăмахсем уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Ĕç рынокĕнче ыттисемпе тупăшса ăнăçтарма пултарас тесен темиçе профессие алла илмелле. Хăшĕсем Канашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр пулăшнипе çапла тăваççĕ те: пĕлĕве вĕçĕмрен тарăнлатаççĕ, хушма специальноç туянаççĕ.

Центр ĕççĕр çынсене, пепки 3 çула çитиччен пăхакан амăшĕсене, пенсие тухнă, анчах ĕçлеме кăмăлĕ пуррисене кăçал Шупашкар, Канаш хулисенчи вĕренӳ заведенийĕсене направленипе çĕнĕ пĕлӳ илме янă. Ĕç рынокĕ кĕтекен профессисене, килĕшӳ тусах вырăнпа тивĕçтерессине шута илнĕ паллах.

Производствăра тар тăкма кăмăл пуррисене центр хăйĕн стенчĕсем, буклечĕсем, сайчĕ, видео тата вырăнти массăллă информаци хатĕрĕсем урлă çĕнĕлĕхсемпе паллаштарсах тăрать.

2014 çулхи 10 уйăхра 175 ĕççĕр çын хăйсене сĕннĕ 22 профессирен пĕрне суйласа вĕреннĕ. Ытларахăшĕ уйрăм çын хуралçи, «В», «Д» категори водителĕ, сутуçă, повар, котельнăй операторĕ, электрогазосварщик специальноçĕсене кăмăлланă, 80 проценчĕ рабочи пулса тăнă. Професси вĕрентĕвĕн тухăçлăхĕ 103,5% танлашнă, мĕнпурĕ 2092,15 пин тенкĕпе усă курнă. Хушма пĕлӳ илнĕ 162 çынран 148-шĕ /85%/ ĕçе вырнаçнă.

Ачи 3 çул тултариччен килте ларакан çамрăк хĕрарăмсене центр РФ 2013 çулхи июль уйăхĕн 2-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен» Раççей Федерацийĕн саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» Саккунĕн 23 статйипе килĕшӳллĕн çĕнĕ специальноç илмешкĕн направлени парать. Вĕсене тивĕçлĕ документсем хатĕрлесе çитерсен ЧР бюджет шучĕпе вĕрентеççĕ. Кăçал çакнашкал майпа 36 амăшĕ усă курнă, 31-шне ĕçе йышăннă. Республика бюджетĕнчен 334,7 пин тенкĕ куçнă.

Тивĕçлĕ канăва тухнисенчен кăçал 7-шĕ /4-шĕ – Канаш хулинчен, 3-шĕ – районтан/ ятарлă курссенче вĕреннĕ, 6-шĕ ĕçе вырнаçнă. ЧР бюджетĕнчен 49,1 пин тенкĕ тăкакланнă.

**Надежда ПЕТРОВА,**
**Канашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрăн профориентаци тата профвĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ.**

В. ГРИГОРЬЕВ сăнӳкерчĕкĕ

# Условисемпе вырăнта паллашмалла

**Ĕç условийĕсене хаклас тĕлĕшпе çĕнĕ мерăсем палăртни çинчен илтрĕм. Çав хаклава ирттернĕ чухне ĕçлекенсем мĕнле правăпа усă кураççĕ?**

**Владимир.**
**Шупашкар хули.**

Федерацин 2013 çулхи декабрь уйăхĕн 28-мĕшĕнчи «Ĕç условийĕсен ятарлă хаклавĕ çинчен» 426-мĕш саккунĕпе паллашма сĕнетпĕр. Шăпах унта ĕçлекенĕн прависене палăртнă.

Унăн çакăн пек правасем пур:

1/ вăл хăй тăрăшакан вырăнти ĕç условийĕсен ятарлă хаклавне ирттернĕ чухне унта хутшăнма;

2/ хăй тăрăшакан вырăнти ĕç условийĕсен ятарлă хаклавне ирттерессипе çыхăннă ыйтусен хуравне асăннă мероприятие йĕркелекен организацин экспертĕнчен е представителĕнчен, ĕçпе тивĕçтерекенрен илме;

3/ хăй ĕçлекен вырăнти ĕç условийĕсен ятарлă хаклавĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе килĕшмесĕр тăма пултарать.

Гражданин хăй ĕçлекен вырăнти ĕç условийĕсен ятарлă хаклавĕн кăтартăвĕсемпе паллашма тивĕç.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службри.**

# «Çулсем иртни кулянтармасть пире»

***Çакăн пек курав уçăлнă Муркашри тури чăвашсен музейĕнче. Унта Лариса Смирнова алăстаçă пухăннисене вĕтĕ шăрçаран тем те пĕр, çав шутра хĕрлĕ пилеш сапакисене те, тума хăнăхтарнă, ăсталăх сехечĕ йĕркеленĕ.***

Лариса Ильинична тивĕçлĕ канăва тухсан вĕтĕ шăрçапа аппаланма тытăннă. Вăл ăсталакан композицисемпе япаласене тума малтанах питĕ йывăр пек туйăнать-мĕн. Анчах кăтартса вĕрентсе пыракан пур тăк, тата çак ĕç патне чун туртать пулсан кăткăсах та мар имĕш. Чун киленĕçĕ пур чухне вара кăмăл та яланах савăк, çулсем иртни те питех шухăшлаттармасть. Асăннă куравра çавăн пекех ытти ăстан ĕçĕпе те паллашма пулать. Паян хĕрарăмсем хĕресле тата тултарса кăна мар, вĕтĕ шăрçапа та, хăюсемпе те тĕрлеççĕ.

**С.РОЗОВА.**

КИРЕ ПУКАНĔ

***Республикăри Физкультурăпа спорт министерстви кире пуканĕ йăтассипе Чăваш Енĕн уçă чемпионатне тата «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм Раççейри XXXI турнира Йĕпреç поселокĕнчи «Патвар» физкультурăпа сывлăх комплексĕнче декабрь уйăхĕн 6-7-мĕшĕсенче ирттерме йышăннă. Çавна май республикăри чылай хулапа районта тимĕр вăййине юратакансен ăмăртăвĕсене йĕркелеççĕ, пĕрлештернĕ командăсен çĕнĕ йышне çирĕплетеççĕ.***



# Пăхаттирсем Пĕтĕм Раççейри турнира хатĕрленеççĕ

Пĕтĕм Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕнче Канаш хулинчи «Локомотив» спорт керменĕнче Дагестанпа Грузи чиккинче 10 çул ытла салтак тивĕçне пурнăçланă, 2010 çулхи август уйăхĕнчи хаяр çапăçура паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса пуç хунă Руслан Желудкин подполковника асăнса IV турнир ирттерчĕç. Помост çине асăннă хулапа пилĕк районти 50 ытла атлет тухрĕ.

Хĕрарăмсен йышĕнче абсолютлă чемпионкăн ятне Канаш районĕнчи Асхва ялĕнчи 17 çулти Татьяна Михайлова тивĕçрĕ. Кăçал Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине вĕренме кĕнĕ спорт мастерĕн кандидачĕ 16 килограмлă снаряда малтан сылтăм, унтан сулахай алăпа 152 хут сулласа çĕклерĕ. Канашри 5-мĕш вăтам шкулти вĕрентекенĕн Алевтина Евграфовăн кăтартăвĕ – 141 очко. Вăл хĕрарăмсен ушкăнĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. 16 çултан кĕçĕн хĕрачасен хушшинче Йĕпреç районĕнчи Снежана Кирилловăпа Елчĕк тăрăхĕнчи Мария Зайцева палăрчĕç.

Çамрăк пăхаттирсен ушкăнĕнче Патăрьел районĕнчи Туçа вăтам шкулĕн вĕренекенĕ Ринат Сафин пысăк çитĕнӳ турĕ. Вăл 24 килограмлă икĕ кире пуканне кăкăр çинчен 120 хут тĕртсе хăй вişинче республика рекордне çĕнетрĕ, икĕ енлĕ кĕрешӳре 174,5 очко пухса абсолютлă чемпион пулса тăчĕ. Турнирăн сумлă парнисемпе ылтăн медалĕсене çавăн пекех Канаш хулинчи Александр Петров, Олег Мыльников, Альмир Дмитриев, транспортпа энергетика техникумĕнчи Владислав Христофоровпа Александр Кипятков, Йĕпреç районĕнчи шкул ачисем Алексей Леонтьевпа Иван Майоров, Елчĕк тăрăхĕнчи Андрей Кузнецов, Тăвай районĕнчи Александр Немов тата Канаш районĕнчи учитель Валерий Филиппов тивĕçрĕç.

Патăрьел районĕнчи Каншелти шкул директорне, РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникне, республикăри «Хыпар» тата «Хресчен сасси» хаçатсен общество корреспондентне Иван Пахомова /1934-2011/ асăнса «Паттăр» спорт шкулĕнче утмăла яхăн çын вăй виçрĕ. Вĕсене савăнăçлă парадра Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Глухов, Чăваш Республикинчи спорт ветеранĕсен канашĕн ертӳçи Василий Шоркин, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсемпе тренерĕсем Владимир Семенов, Борис Глинкин, Алексей Краснов тата Иван Ивановичăн чи çывăх тăванĕсемпе юлташĕсем ăшшăн саламларĕç.

Сăкăт ялĕнчи шкул ачисене явапллă çак турнира Пăла тăрăхĕнчи чи паллă пăхаттирсенчен пĕри, Раççей спорт мастерĕ Алексей Алексеев хатĕрленĕ. Унăн вĕренекенĕсем Михаил Милов, Сергей Бакашин, Юрий Тинюков, Константин Хитров, Алексей Анюров тата Артем Чернов хăйсен виçисенче пĕрремĕш вырăнсене йышăнса тĕрлĕ разряд нормативĕсене пурнăçларĕç. Чи çамрăк тата çăмăл виçеллĕ ачасен ушкăнĕнче 12 килограмлă снарядсене йăтассипе çӳлерех асăннă тренер-преподавателĕн ывăлĕ, пиллĕкмĕш класра вĕренекен Игорь Алексеев çĕнтерчĕ. Юниорсен хушшинче çĕнтернĕ Вăрнар районĕнчи спорт мастерĕн кандидачĕ Алик Волков 24 килограмлă пукансене çĕклессипе турнирăн абсолютлă чемпионĕн ятне çĕнсе илчĕ. 40-50 çултан аслăрах ветерансен ушкăнĕсенче Хирти Пикшикри Ильгизар Махмутов, Тутар Сăкăтĕнчи Тауфик Валеев тата йывăр виçере ăмăртнă Татмăш ялĕнчи 82 çулти мăнасатте Василий Максимов палăрчĕç.

**Петр СИДОРОВ**

САМАНА ТАППИ

# Демографири пархатарлă улшăнусемшĕн

***Хĕрлĕ Чутай районĕнчи тĕп сыватмăшри медицина ĕçченĕсем халăх сывлăхне çирĕплетессишĕн вăй-халне шеллемесĕр тăрăшаççĕ. Кунта 2014 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 19190 çынна шута илнĕ. Чирлисене 5 уйрăмра талăкĕпех сипленме – 60, кăнтăрлахи стационарта сывалма 26 вырăн хатĕрленĕ. Атнар, Мишеркасси, Штанаш, Хĕрлĕ Чутай, Тралькасси, Сĕнтĕкçырми ялĕсенче пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕсене уçнă, вĕсем кунсерен 400 çынна йышăнма хатĕр. Çавăн пекех 22 ялта фельдшер-акушер пункчĕсем ĕçлеççĕ.***



*● Стоматологи кабинетĕнче.*



*● Людмила Кчеткова.*

Шалу çулсерен хушăнать. Тухтăрсем 2010 çулта вăтамран – 14481, 2011 ç. – 20686, 2013 çулта 26436 тенкĕ илнĕ. Вăтам сыпăкри медицина ĕçченĕсен те çак тапхăрта вăл 9015 тенкĕрен 13466 çитнĕ.

1996 çултанпа ача çуратнă амăшĕсем пурте ырă-сывă пулни савăнтарать. Халăх чирлесси республикăн вăтам кăтартăвĕнчен пĕчĕкрех. Пĕлтĕр тĕп сыватмăш диспансеризаципе плана 100,3% тултарнă. Чирлисене электрон мелĕпе йышăнасси аталанать. Çынсем пĕлтĕр 2012 çулхинчен тухтăр патне икĕ хут йышлăрах çырăннă. Модернизаци программипе килĕшӳллĕн ку чухнехи информаци тытăмне ĕçе кĕртме 2013 çулта 383,6 пин тенкĕпе усă курнă.

Районта 6 ФАП хута каймалла. Пĕлтĕр – Туканашра, кăçал Çĕнĕ Атикассинче уçăлнă. Çĕнĕ çулчен Анат Çĕрпӳкассипе Хурашашра туса пĕтермелле, 2015 çулта – Тихăнушкăньпе Çĕн Ирчемесре.

Федерацин «Земство тухтăрĕ» программăпа килĕшӳллĕн медучреждение 2013 çулта 4 çамрăк специалист килнĕ. «Кадр ыйтăвне татса парассишĕн çине тăрсах ĕçлетпĕр, – тет тĕп врач çумĕ Людмила Кчеткова. – Кăçал пирĕн йыша тата вунпиллĕкĕн хушăнчĕç».

Шел те, коллектив тăрăшулăхĕнче ыррипе пĕрле туса çитермелли, ыранхи кун пирки тĕплĕн шухăшламалли сахал мар. Профилактика ĕçне çине тăрса вăйлатмалла, специалистсен пĕлĕвне ӳстермелле... Тухтăрсен 50% çеç категориллĕ. Районта пĕлтĕр эрех ĕçсе вилекенсен йышĕ 4 /!/ хут ӳснĕ. Мĕншĕн? Ку ыйтăва уçăмлатмаллах. Демографи лару-тăрăвĕ те çивĕч. 2013 çулта виçĕм çулхинчен районта 730 çын сахалланнă. 2012 çулта – 179, пĕлтĕр 170 ача çуралнă, çав вăхăтрах 2012 çулта – 351, пĕлтĕр 356 çын вилнĕ.

Диспансеризаци çитĕннисен – 10%, ачасен 37,4% çеç сывлăх тĕлĕшĕнчен пĕрремĕш ушкăна кĕнине çирĕплетет. Ят тухнă яшсенчен салтак атти тăхăнма юрăхлисен йышĕ пĕчĕкки çар комиссариатне çулсерен тивĕçтермест. Тухтăрсен çитĕнекен ăру сывлăхĕшĕн çине тăрса тăрăшмаллине пĕлтерет ĕнтĕ ку.

Районти тĕп сыватмăшра вăй хуракансем хăйсен тивĕçне лайăх ăнланаççĕ: чи малтанах демографие лайăхлатассишĕн, ачасемпе çамрăксен сывлăхне çирĕплетессишĕн хăйсенчен мĕн килнине йăлтах пурнăçламалла.

**Валентин ГРИГОРЬЕВ.**

Илья КЛОЧКОВ сăнӳкерчĕкĕсем

АСТĂВĂМ

# Хамăрлăха çухатас марччĕ

***Пурăннă пулсан Чăваш Енĕн паллă ывăлĕ, халăх педагогикин никĕслевçи, Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ Геннадий Волков академик октябрь уйăхĕн 31-мĕшĕнче 87 çул тултармаллаччĕ. Шел, çак куна пурăнса çитеймерĕ ентешĕмĕр. Хăй ялăнлăхах уйрăлса кайрĕ пулсан та ĕçĕсем ĕмĕрлĕхех юлчĕç.***



Кирек ăçта – Чăваш Енре е Германире, Калмăкра е Тывара, Кăркăсстанра е ытти вырăнта – лекци вуланă, çамрăк ăрупа тĕл пулнă – яланах халăхсен хушшинчи килĕшĕве, хутшăнусене, туслăха çирĕплетме чĕннĕ, майсем шыранă. Хăйĕн хыççăн пултаруллă çынсен ушкăнне хăварнă. Дмитрий Лихачев ăна Никита Бичурин, Иван Яковлев ĕçĕсене малалла тăсаканĕ тесе хакланă.

Геннадий Волковăн вĕренекенĕсенчен пĕри – Шупашкарти 12-мĕш вăтам шкулти чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ, директор заместителĕ Анисия Игнатьева – пуçарнипе кунта иккĕмĕш хут семинар иртрĕ. Унăн тĕллевĕ – тăван чĕлхене пĕлӳ парас ĕçре педагогсене этнопедагогика, этнокультура хатĕрĕсемпе усă курма хавхалантарасси.

Семинара хула шкулĕсенчи чăваш чĕлхи учителĕсем, Геннадий Волков вĕренекенĕсем – Владимир Иванов профессор, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕсем Кронид Петров, Константин Портнов, çавăн пекех академик ятне упраса хăварас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлекен Лидия Филиппова журналист /"Республика" хаçатăн директорĕ-редакторĕ/ хутшăнчĕç.

Палăртса хăварар: Лидия Ивановна иртнĕ çул Геннадий Никандрович пирки "Пророк земли чувашской" кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Асăннă кăларăм академик ятне асра тытса ĕçлекенсене, ун тĕллевĕсене малалла тăсакансене, этнопедагогика материалĕсемпе вĕрентӳре анлăн усă куракан педагогсене хавхалантаракан парне пулчĕ. Камсем тивĕçрĕç-ха ăна?

Шупашкарти 48-мĕш тата 17-мĕш шкулсенчи чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем Надежда Красновăпа Надежда Баталина "Геннадий Волковăн чĕрĕ опычĕн асамлă пĕрчисем" тата Шупашкарти 19-мĕш шкулти Роза Мазиковăпа Любовь Кудрявцева "Геннадий Волков идейисем – вырăс шкулĕнчи чăваш чĕлхи урокĕсенче" презентацисем ирттерчĕç. 62-мĕш шкулти Людмила Николаевăпа Нина Егорова урокра ирттерекен ĕçсемпе кăна çырлахмаççĕ. Кунта тăваттăмĕш хут ĕнтĕ "Хавхалану" фестиваль йĕркеленĕ. Унта районсенчен те хутшăнакансем пулнă. Ĕçе пĕтĕмлетсе "Хавхалану" альманах кăларнă. Семинарта вĕрентӳçĕсем хăйсен ĕçĕсен презентацине ирттерчĕç. Илья Клочков фотожурналистăн "Геннадий Волков – сăнӳкерчĕксенче" куравĕпе паллашма та питĕ кăмăллă пулчĕ.

Владимир Иванов профессор аса илĕвĕсем те кăмăла çĕклерĕç, академикăн кунçулĕпе çывăхланма пулăшрĕç. 12-мĕш шкулти 8-мĕш класри Елена Николаева этнопедагогăн пурнăçĕпе паллаштарчĕ, асăннă класра вĕренекенсемех Г.Волковăн "Аннеçĕм, анне..." сăввине вуласа тĕнчери чи çывăх çыннăмăрсене упрама кирлине тепĕр хут аса илтерчĕç.

Сăмах илекен чылайăн пулчĕ. Вĕсен калаçăвĕнчен çакăн пек пĕтĕмлетӳ турăм: пирĕн инкек – хамăрлăха маннинче. Ентешĕмĕрĕн сăмахĕсене, вĕрентĕвне тĕпе хурса тăвалла пулсан та, малаллах ăнтăлмалла. Çапла тума тата мĕн çитмест? Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен шухăшĕпе – 9-мĕш классен вĕренӳ программине Волков произведенийĕсене кĕртмелле, республикăра ентешĕмĕрĕн музейĕ, палăкĕ пулмаллах.

**Надежда СМИРНОВА.**

Илья КЛОЧКОВ сăнӳкерчĕкĕ


Строительная компания ЦЕНТР
БЕТОН
РАСТВОР
ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

БЕТОН всех марок
(М-200 - 2800 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
ДОСТАВКА
тел.: 29-25-34, 29-24-88

Требуются РАЗНОРАБОЧИЕ на демонтаж кирп. кладки. З/п высокая. Т. 89373948993.

Требуются ГАЗОРЕЗЧИКИ на демонтажные работы. З/п высокая. Т. 89373948993.


РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## *ПУЛĂШУ УСЛУГИ*

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

